25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1943
ФЕВРАЛЬ
21
ВЫРСАРНИКУН
42(6279) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

Февралӗн 19-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Февралӗн 19-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем Харьковран хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре малалла тапӑнса пырса **Люботин** хулипе чугунҫул станцине, **Мерефа** хулипе чугунҫул станцине тата Ольшаны, **Пересечная, Песочин,** Высокий, Комаровка, **Покотиловка** ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене тытса илнӗ.

Курск облаҫӗнче пирӗн войскӑсем **Обоянь** хулипе чугунҫул станцине тытса илнӗ.

Краснодар районӗнче пирӗн войскӑсем **Поповическая** ятлӑ район центрне тата **Гривенская, Новониколаевская, Андреевская, Нововеличковская** ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех ҫапӑҫса пынӑ.

* * *

Февралӗн 18-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 15 батарейине тата минометсен 8 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен 5 складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Дон ҫинчи Ростовран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем, малалла тапӑнса пырса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Н-ски часть юхан шыв урлӑ каҫнӑ та, нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, тӑшман оборонин тӗреклетнӗ узелне тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 200 вилли ытла выртса юлнӑ. Хӑй тӗллӗн ҫӳрекен пӗр оруди, 2 танк, 13 автомашина, радиостанци тытса илнӗ тата темиҫе вуншар ҫынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Красноармейское районӗнче пирӗн войскӑсем тӑшманпа **хӗрӳллӗн** ҫапӑҫнӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем гитлеровецсен темиҫе контратакине сирсе янӑ; малалла куҫса, тӑшманӑн тӗреклетнӗ позицийӗсене йышӑнса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫсен 300 салтакӗпе офицерӗ вилнӗ. Нимӗҫсен 4 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ.

* * *

Грайворон районӗнче **пирӗн войскӑсем** малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Тӑшманпа хаяррӑн ҫапӑҫса, Н-ски чаҫӑн боецӗсем халӑх пурӑнакан пунктра хӑйсене хӳтӗлесе тӑнӑ 2 нимӗҫ полкӗн юлашкийӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. **Урамри** ҫапӑҫусенче 600 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ, 8 танк тата 15 автомашинӑна персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. 2 танк, 4 оруди, 23 автомашина, горючи тултарнӑ 7 цистерна тата 2 пысӑк склад тытса илнӗ. Тепӗр участокра нимӗҫ пехотине пӗр батальон таран пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн 300 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Курскран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем тӑшмана хӗссе пынӑ. Нимӗҫсем фронтӑн ҫав участокне васкаса резервсем илсе пыраҫҫӗ. Юлашки ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 323-мӗш пехотӑн дивизийӗн ҫак кунсенче Лионран (Францирен) килсе ҫитнӗ подразделенийӗсем ҫапӑҫнине палӑртнӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем халӑх пурӑнакан вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункта йышӑнса илнӗ, ҫавӑн чухне 200 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. 2 оруди, 13 пулемет тата боеприпассен пысӑк складне тытса илнӗ.

* * *

Фатежран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем наступленилле ҫапӑҫусем туса пынӑ. Н-ски часть, малалла куҫса пырса, нимӗҫсен 400 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ, 100 салтакӗпе офицерне ҫити тыткӑна илнӗ. 8 оруди, тырӑ тата тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ хунӑ 6 склада тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем нимӗҫсен 60 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. 2 танкетка, 18 оруди, 50 пулемет, 100 автомат, 300 винтовка, 34 автомашина, 10 мотоцикл, 30 лаша, 100 лав тата продовольствипе япаласен 5 складне тытса илнӗ.

* * *

Краснодар крайӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен «Мститель» (тавӑракан) ятлӑ отрячӗ чугунҫул ҫине темиҫе тӗлте минӑсем хурса тухнӑ. Ҫав минӑсем ҫине пырса кӗрсе, нимӗҫсен икӗ ҫар эшелонӗ ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Нимӗҫсен 111-мӗш пехотӑн дивизийӗнчи 70-мӗш полкӑн 10-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Отто Бауэр ҫапла каласа панӑ: «Эпир вырӑссем хӗснипе Кавказран чакса кайма пуҫласан, батальон командирӗ пире ҫапла каларӗ: эпир фронт линине тӳрлететпӗр, Георгиевск районӗнче чарӑнатпӑр, терӗ. Анчах та ӗҫ часах улшӑнса кайрӗ. Полк командирӗ **Никкель майор** эпир каялла чакма пуҫласан иккӗмӗш кунӗнче, хӑйне чирлӗ ҫын вырӑнне хурса, ҫӑмӑл машина ҫине ларчӗ те кайрӗ. Вырӑссем пире хӑваласа пычӗҫ, вӗсем пирӗн сыхӑну линийӗсене тытса илчӗҫ. Виҫҫӗмӗш кунӗнче вара эпир хӑраса ӳксе арпашса кайрӑмӑр». Ҫав дивизири 50-мӗш полкӑн 2-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Вилли Лемке тата ефрейтор Гергард Грюнер ҫапла каласа панӑ: «Ӗлӗкрех эпир малалла пӗрхӗнеттӗмӗр, кашни хулашӑн, кашни станцӑшӑн пысӑк хак тӳлеттӗмӗр. Халӗ ӗнтӗ ҫакӑнтан каяс тесе, е, пирӗн патӑрта каланӑ пек, «тӑшманран хӑпас» тесе, малтанхинчен кая мар йывӑр ҫухатусем тӳсетпӗр. Пирӗн дивизи каялла чакса пырса халран кайрӗ. Ротӑсенче 20—30-шар ҫын ҫеҫ тӑрса юлчӗ. Нумай салтака вӗлернӗ е амантнӑ. Нумайӗшӗ тыткӑна лекнӗ».

* * *

Ставрополь крайӗнчи Спицевское ялӗнче, Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем ирӗке кӑларнӑскерте, пурӑнакан ҫынсем нимӗҫ бандичӗсем мирлӗ совет гражданӗсене тискеррӗн асаплантарни ҫинчен каласа панӑ. Спицевское ялӗнче тӑнӑ вӑхӑтра гитлеровецсем 168 ҫынна — старик-семпе хӗрарӑмсене тата ачасене — асаплантарса вӗлернӗ. Нимӗҫсем ҫав ялти ҫынсене вилӗ шӑтӑкӗ чавтарнӑ, унтан вӗсене 20-шер ҫыннӑн ҫав шӑтӑка хӑвала-хӑвала кӗртсе, вӗлернӗ.

Февралӗн 20-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Февралӗн 20-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех наступленилле ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Дон ҫинчи Ростовран хӗвеланӑҫнерехре Н-ски соединенин чаҫӗсем халӑх пурӑнакан виҫӗ пункта, тӑшман питӗ вӑйлӑ тӗреклетнӗскерсене, тытса илнӗ. Оборонӑн ҫав рубежӗшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 200 салтакӗпе офицерне ытла вӗлернӗ, 13 танкне тата 5 бронемашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Инженерла пурлӑх тиенӗ 18 автомашинӑна тытса илнӗ.

* * *

Ровеньки хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем ӑнӑҫлӑн наступленилле ҫапӑҫусем туса пынӑ. Н-ски моторизованнӑй часть хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн халӑх пурӑнакан пысӑк пункта тытса илнӗ. 14 оруди, 19 пулемет тата боеприпассен темиҫе складне тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем, пехотинецсем контратакине сирсе кӑрса, нимӗҫсен 8 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Тӑшманӑн пехотине пӗр рота таран тӗп тунӑ.

* * *

Харьковран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем малалла тапӑнса пынӑ. **Люботин** районӗнче нимӗҫ пехотине пӗр полка ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, 16 танк, 150 автомашина тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 13 орудие пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра пирӗн танкистсем нимӗҫсен 9 танкне, 39 автомашинине тата 8 противотанковӑй орудине пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ, вӗсем хушшинче 4 йывӑр оруди пур.

* * *

Курскран ҫурҫӗреллерехре пирӗн чаҫсем гитлеровецсен контратакисене сирсе тӑнӑ, пӗр пайӗ малалла куҫса пынӑ. Н-ски часть ҫӗрлехи ҫапӑҫура нимӗҫсен 300 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. 12 миномет, 16 пулемет, нумай винтовка тата 3 радиостанци тытса илнӗ. Тепӗр участокра нимӗҫсем пирӗн подразделение хирӗҫ контратака тунӑ. Пулеметчик кӗҫӗн сержант Шлюхин юлташ тӑшманӑн флангне пырса тухнӑ та, сасартӑк пеме тытӑнса, вуншар нимӗҫ салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Ытти гитлеровецсем вара пӗр йӗркесӗр каялла чакнӑ.

* * *

Краснодартан хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан [illegible] пункта тытса илнӗ. Тӑшман, совет [illegible]

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ

Чӑваш республикинчи производство предприятийӗсенчи рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Производство заданийӗсене ӑнӑҫлӑн тултарнӑшӑн Чӑваш республикинчи предприятисен уйрӑмах палӑрнӑ рабочийӗсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине парса наградӑлас:

1. Хасяна Хафизовна **Алимовӑна**—обойщицӑна.
2. Петр Анисимович **Анисимова**—смена мастерне.
3. Василий Григорьевич **Григорьева.**
4. Александр Александрович **Григорьева**—мастера.
5. Александр Максимович **Гутника**—пӑхӑрпа ӗҫлекене.
6. Ксения Ивановна **Даниловӑна**—смена мастерне.
7. Кирилл Дмитриевич **Дмитриева.**
8. Сергей Михайлович **Емелина**—фрезеровщике.
9. Алексей Алексеевич **Иванова**—старши мастера.
10. Валентин Андреевич **Кондаурова**—слесарь-монтажнике.
11. Агафия Ивановна **Кондратьевӑна** — маляра.
12. Николай Иванович **Корнеева**—токарь-декальщике.
13. Ольга Кирилловна **Кракозовӑна** — полировщицӑна.
14. Василий Данилович **Краснощекова**—слесаре.
15. Иван Александрович **Кузнецова**—слесаре.
16. Сергей Михайлович **Кузьмина**—тимӗрҫе.
17. Александр Саввич **Мазуренкона.**
18. Иван Никитич **Мартынова.**
19. Илья Александрович **Монастырские** — столяра.
20. Николай Тимофеевич **Назарова**—пӑхӑрпа ӗҫлекене.
21. Петр Филиппович **Павлова**—сборочнӑй цех начальникне.
22. Павел Филиппович **Павлова.**
23. Александр Порфирьевич **Порфирьева** — фрезеровщике.
24. Василий Терентьевич **Пастухова**—столяра.
25. Михаил Андреевич **Полукарова**—столяра.
26. Самуил Борисович **Слуцкие.**
27. Степан Иванович **Шараськина**—столяра.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули,
1943 ҫулхи февралӗн 20-мӗшӗ.

ХӖРЛӖ ҪАР КУНӖ УМӖН

ҪӖМӖРЛЕ, февралӗн 19-мӗшӗ. **(«Чӑваш Коммуни» корр.).** Ҫак кунсенче предприятисемпе артельсенче производствӑллӑ пысӑк ҫӗкленӳ. Кашни производствӑллӑ коллектив Хӗрлӗ Ҫар XXV ҫул тултарнӑ уяв умӗнхи ӑмӑртура илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫлассишӗн кӗрешет. Комбинатри рабочисем чылайӗшӗ икшер ҫыншӑн ӗҫлеҫҫӗ. Комсомолецсен фронтовой бригадин членӗсем Анисимовпа Волков юлташсем февралӗн 16-мӗшпе 17-мӗшӗнче икӗ талӑк хушши цехран тухмарӗҫ. Вӗсем васкавлӑ задание пӗр кун маларах пурнӑҫларӗҫ. Бригада членӗсем Зотов, Мидушкин тата Назаров юлташсем ҫав кун нормӑна 230—260 процент тултарчӗҫ. Фронтовой бригада Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ уява уйӑхри плана икӗ хут ирттерсе пурнӑҫланипе паллӑ тӑвать.

Хӗрлӗ Ҫар кунне хатӗрленнӗ май, агитаторсемпе докладчиксем «Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарни», «Ленинпа Сталин—Хӗрлӗ Ҫарӑн организаторӗсем» т. ыт. темӑсемпе докладсемпе калаҫусем иртереҫҫӗ. Вӑл темӑсемпе колхозсенче 17 доклад, хулари предприятисемпе учрежденисенче 38 доклад иртернӗ.

Хулари вӑтам шкулӑн директорӗ Соловьев юлташ «1918 ҫулта нимӗҫ оккупанчӗсене аркатса тӑкни» ҫинчен доклад турӗ. Виҫӗмкун район центрӗнче агитаторсемпе семинар пулса иртрӗ. Унта «Ленинпа Сталин—Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫулпуҫӗсем» темӑна инструкцилле доклад турӗҫ.

Ленинпа Сталин—Хӗрлӗ Ҫарӑн организаторӗсемпе ҫулпуҫӗсем

Проф. И. Разгон

Большевиксен партипе совет государствин организаторӗсемпе ҫулпуҫӗсем Ленинпа Сталин хамӑр ҫӗршыври рабочи класпа ӗҫхалӑхне, ирӗке тухасшӑн кӗрешсе пынӑ пӗтӗм истори тӑршшӗпех, тӑван ҫӗршыва юратма вӗрентсе пынӑ, вӑлӑрӗ хӗҫпӑшала ҫирӗп тытса ҫеҫ ҫӗршывӑн чыслӑхне, ирӗклӗхне, никама пӑхӑнманлӑхне упраса хӑварма пулать, тесе вӗрентнӗ. 1905-мӗш ҫултах ӗнтӗ Ленин ҫапла ҫырнӑ: «Политикӑллӑ ирӗклӗхпе классен кӗрешӗвӗн аслӑ ыйтӑвӗсене, тӗрӗссипе илсен, пӗр вӑй кӑна татса парать, ҫавӑнпа та пирӗн ҫав вӑя хатӗрлесе ӑна организацилесси ҫинчен тата унпа оборона тӗлӗшпе кӑна мар, наступлени тӗлӗшпе те активлӑн усӑ курасси ҫинчен шутламалла пулать» (Соч., т. VIII, стр. 42).

Ленинпа Сталин тата вӗсем ертсе пыракан большевиксен партийӗ рабочи класа хӗҫпӑшаллантарас, ӑна вӑрҫӑ техникине вӗрентсе хатӗрлес, хӗҫпӑшаллӑ кӗрешӳ искусствине вӗрентес ӗҫе питӗ паха вырӑна хурса хисепленине пула кӑна 1917-мӗш ҫулти Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци ҫӗнтерме пултарчӗ. Хӗрлӗ гварди отрячӗсене организацилесе вӗсене вӗрентсе хӗҫпӑшаллантарас тӗлӗшпе большевиксен партийӗ ҫав тапхӑрта пит нумай ӗҫлерӗ. Большевиксен партийӗ кивӗ ҫар хушшинче те нумай ӗҫленӗ, унти чи лайӑх элементсене революци енне ҫавӑрса пынӑ.

Совет Российӑн чи хӑрушӑ тӑшманӗ малтанхи вӑхӑтра Германи империализмӗ пулнӑ. Темиҫе вунӑ ҫул хушши Российӑна поход тума хатӗрленсе, унӑн хӗвеланӑҫӗпе кӑнтӑрти ҫӗрӗсене тытса илме ӗмӗтленсе, Германи военщини, Совет республики вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчен вӑхӑтлӑха вӑйсӑр пулнипе усӑ курса, Украинӑпа Петроград ҫине поход пуҫласа янӑ.

Кивӗ ҫар ҫапӑҫма пултарайман, ҫавӑнпа та вӑл социализмлӑ тӑван ҫӗршыв ҫине тулашран тапӑнасран хӳтӗлес задачӑна пурнӑҫлама пултарайман. Вӑл задачӑна ӗнтӗ Совет ҫӗршывӗн ҫӗнӗ ҫарӗ — рабочисемпе хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ кӑна пурнӑҫлама пултарнӑ.

1918-мӗш ҫулхи январӗн 15-мӗшӗнче (28-мӗшӗнче) Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарне тӑвасси ҫинчен Ленин алӑ пусса декрет кӑларнӑ. Вӑл декрет ӗнтӗ хамӑр ҫӗршыври рабочи класпа ӗҫхалӑхӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйне организацилес тӗлӗшпе — 1905 ҫулта баррикадӑсенче ҫапӑҫнӑ хӗрлӗ гварди дружинисенчен пуҫласа Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци патне ҫитиччен — большевиксен партийӗ тунӑ ӗҫе вӗҫлесе ҫитерни пулнӑ. Ҫав декрет тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫарӑн пирвайхи отрячӗсене организацилени пулнӑ. Хӗрлӗ Ҫара хӑйӗн вӑйне, хӑйӗн пурнӑҫне Совет влаҫне хӳтӗлемешкӗн пама хатӗр пулнисене ҫеҫ илнӗ. Хӗрлӗ Ҫар ретне хӗрлӗ гварди отрячӗсенче организациленсе пӑртак ҫар ӗҫне вӗреннӗ рабочисен чи ӑнланулла пайӗ, кивӗ ҫарӑн тата флотӑн революциллӗ шухӑш-кӑмӑллӑ уйрӑм чаҫӗсем тата чухӑн хресченсем кӗнӗ.

1918-мӗш ҫулхи февралӗн 18-мӗшӗнче, вырӑс халӑхӗн курайми тӑшманӗсем — нимӗҫ империалисчӗсем, троцкистсемпе бухаринецсен сутӑнчӑклӑхӗпе усӑ курса, перемири условийӗсене тискеррӗн пӑрахӑҫласа, пӗтӗм фронт талккишӗпе наступлени пуҫласа ярсан, ҫамрӑк Хӗрлӗ Ҫар пирвайхи хут ҫапӑҫӑва хутшӑннӑ.

Совет ҫӗршывӗшӗн ҫакӑ чи хӑрушӑ тапхӑр пулнӑ. Совет республики пит пысӑк хӑрушлӑх умӗнче тӑнӑ. «Социализмлӑ тӑван ҫӗршыв хӑрушлӑхра», тенӗ ун чухне Ленин.

Ленинпа Сталин Петрограда хӳтӗлес ӗҫе хӑйсем ертсе пынӑ, хӑйсен тӗп вӑйне нимӗҫсем Петроград ҫине янӑ пулнӑ. Хӗрлӗ Ҫар ретне темиҫе вуншар пин ҫын хӑйсен ирӗкӗпе кӗнӗ. 1918-мӗш ҫулхи февралӗн 23-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ҫар Нарвӑпа Псков патӗнче нимӗҫ оккупанчӗсене вирлӗн ҫӗмӗрнӗ. Малтан нимӗҫ войскисен наступленине чарса лартнӑ, унтан, Хӗрлӗ Ҫар пыра-пыра ҫапнипе, нимӗҫ полкӗсем каялла чакма пуҫланӑ. Ҫак кун вара Хӗрлӗ Ҫар ҫуралнӑ кун пулса тӑнӑ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн пирвайхи ҫулӗ вара Прибалтикӑна, Белоруссине, Украинӑна тата Ҫурҫӗр Кавказа тытса илнӗ нимӗҫ оккупанчӗсемпе кӗрешсе иртсе кайнӑ. Ҫав кӗрешӗве Ленинпа Сталин ертсе пынӑ. Нимӗҫсен тарҫи пулса тӑракан генерал Краснов бандисенчен Царицын хулине хӳтӗлес ӗҫе Сталин хӑй ертсе пынӑ. 24 ҫул иртсен, халӗ ӗнтӗ Сталин ячӗпе хисепленекен ҫав хула умӗнчех вӑрҫӑсен историйӗнчи чи вӑйлӑ ҫапӑҫу пулса иртрӗ. 1918-мӗш ҫулта Сталин юлташ ертсе пынипе Царицына геройла хӳтӗлени — 1942—1943-мӗш ҫулсенче нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ Сталинградра хӳтӗлекен Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсемшӗн чӗрӗ пример пулса тӑчӗ.

Ленинпа Сталинӑн чи ҫывӑх соратникӗсем, большевиксен партин паллӑ деятелӗсем — Молотов, Свердлов, Фрунзе, Дзержинский, Орджоникидзе, Киров, Ворошилов тата ытти юлташсем ҫар руководителӗсем пулса тӑчӗҫ. Совет ҫӗршывне вутлӑ ункӑпа хупӑрласа илнӗ ҫавтери пысӑк фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӳллӗн ҫапӑҫнӑ. Кӗрешӳре вӑл ӳссе, тӗреклене пынӑ, унта дисциплина вӑйланса пынӑ, вӑл ҫар искусствипе хӗҫпӑшалланнӑ. Ҫав кӗрешӳре Хӗрлӗ Ҫарӑн полководецӗсем ӳссе ҫитӗннӗ, советла ҫар теорийӗ аталанса пынӑ.

Ҫарта ҫирӗп дисциплина тӑвасси ҫине Ленинпа Сталин уйрӑмӑнах вирлӗн савӑрӑнса пӑхнӑ, унсӑррӑн Хӗрлӗ Ҫар хӑйӗн умне лартнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртме пултарайман пулӗччӗ. Партин VIII-мӗш съездӗнче ҫар ыйтуне сӳтсе-явнӑ вӑхӑтра Сталин юлташ ҫапла каланӑ: «Ҫакӑнта тапратнӑ ыйтусем вӗсем пурте пӗр ыйту патне: Российӑра ҫирӗп дисциплинӑллӑ ҫар пулмалла-и, е ҫук-и, текен ыйту патне пырса тухаҫҫӗ. Пӗтӗм ыйту ҫакӑнта.

...Е рабочисемпе хресченсен, пуринчен ытла хресченсен, ҫирӗп дисциплинӑллӑ чӑн-чӑн ҫарне туса Российӑна хӳтӗлӗпӗр, е пирӗн пӗтмелле пулать».

Интервентсене тата белогвардеецсене хирӗҫ кӗрешнӗ вӑхӑтра 5 миллионлӑ дисциплинӑллӑ Хӗрлӗ Ҫар туса хунӑ. Вӑл япӑх хӗҫпӑшалланнӑ, начар тумланнӑ пулнӑ, часчасах тата выҫӑ та ларкаланӑ. Ҫавах та Ленинпа Сталин ертсе пынипе вӑл Совет влаҫӗн пур тӑшманӗсене те аркатса тӑкнӑ. Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑйӗ чи малтанах вӑл халӑхпа тачӑ ҫыхӑнса тӑнинче, унӑн ӑнланӑвӗ пысӑккинче, вӑл Ленинпа Сталин ӗҫне чун-чӗререн парӑнса тӑнинче пулнӑ.

Ленинпа Сталин яланах кӗрешӳн чи хӑрушӑ участокӗсене Хӗрлӗ Ҫарӑн тӗп вӑйӗсене яма пӗлнӗ. Ударлӑ задачӑсене пурнӑҫлассине, Ленин сӗннипе, парти яланах Сталин ҫине хунӑ. Ҫавӑн пек пулнӑ Петроград ҫине хӑрушлӑх килсе тухсан. Ҫавӑн пекех пулнӑ Колчака аркатса тӑкма хатӗрленнӗ тапхӑрта. Ҫавӑн пекех Сталин хӑй туса хатӗрленӗ план тӑрӑх, хӑй ертсе пынипе, Деникин ҫарне, шурӑ поляксен ҫарне тата белогвардеецсемпе интервентсен юлашки шанчӑкне — Врангель ҫарне аркатса тӑкассине пурнӑҫланӑ. Сталин пырса ҫитсен, кирек ӑҫта та яланах йӗркелӗх хӑвӑрт ӳснӗ, дисциплина хӑпарнӑ, тӗп тӗллев палларах курӑннӑ, тӑшмана хытӑрах та хытӑрах пыра-пыра ҫапнӑ. Ҫапла вара ҫӗнтерӳ пулса пынӑ.

Граждан вӑрҫи пынӑ вӑхӑтрах Ленинпа Сталин вӑрҫӑра тыл мӗн тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине уйрӑмӑнах палӑртнӑ.

«Вӑрҫа тивӗҫлипе туса пырас тесен, ҫирӗп организациленӗ тыл кирлӗ, — тесе ҫырнӑ Ленин. — Чи лайӑх ҫар та, революци ӗҫне вӗҫне ҫитичченех парӑннӑ ҫынсем те, вӗсем кирлӗ пек хӗҫпӑшалланман пулсан, кирлӗ таран продовольстви пулмасан тата вӗсем вӗренмен пулсан, вӗсене пурпӗрех пӗтерсе тӑкӗҫ» (Соч., том XXII, стр. 304).

Сталин юлташ хӑйӗн сӑмахӗсенче Хӗрлӗ Ҫаршӑн тыл епле пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине уйрӑмӑнах, пӗрре кӑна мар палӑртнӑ. Ленинпа Сталин ҫирӗп тыл тӑвассишӗн пӗр чарӑнмасӑр тӑрӑшни Хӗрлӗ Ҫара малалла ҫирӗплетес ӗҫре ҫавтери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

Ленин вилнӗ хыҫҫӑн, Советсен II-мӗш съездӗнче, Сталин юлташ пӗтӗм ҫӗршыв ячӗпе тупа туса ҫапла каланӑ: «Хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ Флота ҫирӗплетессишӗн эпӗр хамӑр вӑйӑмӑрсене шеллемӗпӗр», тенӗ.

Сталин юлташ ертсе пынипе Совет ҫӗршывӗ ҫав тупа тунине пурнӑҫа кӗртрӗ. Ҫӗршыва индустриализациленӗ никӗс ҫинче Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑй-хӑвачӗ калама ҫук ӳссе кайрӗ. Ҫар техники енчен вӑл тӗнчери чи малта пыракан ҫарсенчен пӗри пулса тӑчӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн командирӗсем те ӳссе пычӗҫ, вӗсем, хамӑрӑн ҫар академийӗсенче теори енчен лайӑх вӗреннӗскерсем, халӗ ӗнтӗ советлӑ ҫар искусствин вӑйне кӑтартнӑскерсем, вырӑс ҫарӗн чи лайӑх полководецӗсен — Суворовпа Кутузовӑн аслӑ традицийӗсене малалла аталантарса пыраҫҫӗ.

Аслӑ Сталин ертсе пыракан Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑй-хӑвачӗ нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ пыракан Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫав тери туллин палӑрчӗ. Тӗнчере нимле ҫар та ҫавтери вӑйлӑн хӗснине тӳсеймен пулӗччӗ, тӗнчере нимле ҫӗршыв та, Совет ҫӗршывӗсӗр пуҫне, нимӗҫ фашисчӗсен ҫар машини пырса ҫапнисене чӑтайман пулӗччӗ. Ҫавна тӳсме пирӗн ҫӗршыв анчах, Ленинпа Сталин организацилесе воспитани панӑ пирӗн Хӗрлӗ Ҫар анчах пултарчӗ. Историре урӑх курман ҫавӑн пек вӑйлӑ тапӑнӑва вӑл тӳссе иртерчӗ кӑна мар, оборонӑран ҫавтери лайӑх организациленӗ наступлени патне куҫма та пултарчӗ. Ютҫӗршывсенчи ҫар специалисчӗсем вӑл наступление «стратегин чи лайӑх тӗслӗхӗ» тесе хак параҫҫӗ. Англири паллӑ «Таймс» хаҫат, Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен каланӑ чух, ҫакӑн пек вывод тӑвать: кунта, тет вӑл, совет хӗҫпӑшалӗн хӑвачӗ ҫинчен кӑна мар, вырӑс стратегийӗ ҫинчен те сӑмах пырать. «Паллах, тесе ҫырать хаҫат, — кунта эпир пӗтӗмпех ҫӗнӗ стратеги пулнине куратпӑр... Европа умӗнче ҫӗнӗ сратегиллӗ, тӗпренех ҫӗнӗ совет ҫарӗ тӑрать».

Мӗнле «ҫӗнӗ стратеги-ха» вӑл? Вӑл — сталинла стратеги, вӑл сталинла ҫар руководстви, сталинла ҫар искусстви, ӑна Сталин юлташ пӑхса ӳстернӗ хӑватлӑ Хӗрлӗ Ҫар командирӗсен талантлӑ ушкӑнӗ пурнӑҫа кӗртсе пырать.

Хӑй 25 ҫул тултарнӑ куна Хӗрлӗ Ҫар Германи захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӗвӗн ҫавтери пысӑк фронтӗнче ҫӗнтерӳллӗ наступлени туса пынипе кӗтсе илет. Ҫӗршывӑн пӗтӗм шухӑш-кӑмӑлӗсем, Хӗрлӗ Ҫарӑн пӗтӗм шухӑш-кӑмӑлӗсем малалла кӑна—хӗвеланӑҫнелле туртӑнаҫҫӗ. «Нимӗҫ оккупанчӗсене ҫапса аркатса, вӗсене хамӑрӑн тӑван ҫӗршывран хӑваласа кӑларассишӗн — малалла!..» Совет ҫӗршывӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен Верховный Главнокомандующийӗн приказӗнчи ҫак сӑмахсем вӗсем пӗтӗм совет халӑхӗн тата паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн шухӑш-кӑмӑлӗпе ӗмӗчӗсене палӑртса тӑраҫҫӗ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирӗн войскӑсем КРАСНОГРАД, ПАВЛОГРАД хулисене йышӑнса илнӗ

Февралӗн 20-мӗшӗнче Украинӑра, вӑйлӑн наступлени тунӑ хыҫҫӑн, кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ фрончӗн войскисем КРАСНОГРАД хулипе чугун ҫул узелне тата ПАВЛОГРАД хулипе чугунҫул узелне йышӑнса илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

1944 ҫулшӑн аш-какай параҫҫӗ

СЕНТЕРВАРРИ. «Сӗнтӗрпуҫ» колхоз государствӑна 1943 ҫулшӑн аш-какай парса татнӑ хыҫҫӑн 1944-мӗш ҫулшӑн 360 килограмм пачӗ.

Упакасси ялсоветӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз та аш-какай памалли плана ҫак кунсенче тултарчӗ.

Н. Константинов.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

каймă чарас тесе, оборонăн çĕнĕ линийĕсене тытса хунă, нимĕçсем хура-хура тухнă. Совет боецĕсем вĕсен атакисене тăшманăн оборона линине татнă та малалла куçса пыраççĕ. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 9 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, çынсем ларса пыракан 4 вагон тата орудисемпе автомашинăсем тиенĕ 7 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Орел облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ хаярран çапăçса тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем трофейсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 166-мĕш маршевăй батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Эрих Фунфат çапла каласа панă: «Пирĕн маршевăй батальона Францирен тăракан тĕрлĕ чаçсенчен чĕнсе илнĕ салтаксем тунă. Январĕн 14-мĕшĕнче эпир поезд çине лартăмăр та Варшавăран тухса кайрăмăр. Унтан пирĕн батальона Курска ячĕç. Курск çитсен пире командовани приказне вуласа пачĕç, унта çапла каланăччĕ: «Курска вăйлăн тĕреклетнĕ, ăна кирек мĕн пулсан та памалла мар. Анчах та иккĕмĕш е виççĕмĕш куне паника пуçланса кайрĕ. Вырăссем пирĕн оборона çине иккĕн пулчĕç. Пур складсене те тата мĕнпур пурлăха пăрахса хăвартăмăр. Батальонран нумай салтак тарса саланчĕç, вĕсем вара тыткăна лекнĕ».

* * *

Краснодар крайĕнчи Тверская станицинче пурăнакан çынсем нимĕç фашисчĕсем Багдасар Шабарян колхозникĕн çемьине асаплантарса вĕлерни çинчен акт тунă. Нимĕç салтакĕсем пĕр кунне Шабарян çуртне çĕмĕрсе кĕнĕ те сĕт ыйтнă. Гарпина Шабарян çапла каланă: «Манăн сĕт çук», тенĕ. Урса кайнă бандитсем çав çемьене пĕтернĕ: 80 çулхи Багдасар Шабаряна, 70 çулхи Гарпина Шабаряна, 47 çулхи Арута Шабаряна, çамрăк ачасене Аршака, Валентина тата Владимира вĕлернĕ. Гитлеровецсем Шабарян çемьине станицăри мĕнпур халăх умĕнче персе вĕлернĕ.

Гитлеровецсен тискер ĕçĕсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Кубане фашистла оккупантсенчен тасатса пынă чух, Хĕрлĕ Çар боецĕсем пур çĕрте те нимĕçсем мирлĕ халăха тата тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн мăшкăлланин йĕрĕсене тупаççĕ.

Хаярран çапăçнă хыççăн Адыгейăри Лакшукай ялне тытса илсен пирĕн боецсем пĕр çуртра нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ 39 красноармеецпе командирăн виллисене тупнă. Фашистсем вĕсен куçĕсене чиксе шăтарнă, аллисене хыçалалла хуçлатса хунă, ÿчĕсем çинче вĕсен çĕçĕпе чикнĕ сурансем нумай.

Краснодар патĕнчи пĕр ятсăр высотана йышăнса илсен, красноармеецсем питех те хăрушă япала курнă. Фашистла ирсĕрсем аманнă боецсемпе командирсене тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ вырăнта çырнă акта çапла каланă: „Пирĕн войскăсем йышăнса илнĕ нимĕç оборони патĕнче блиндажсенче тупнă виллĕсене тĕплĕн пăхса тухни çав аманнă пирки тыткăна лекнĕ совет çыннисене нимĕçсем тискеррĕн асаплантарнине кăтартрĕ.

1. Спиридон Семенович Хирин—гварди красноармеецĕ, 1910 çулта çуралнăскер, Краснодар крайĕнчи Туапсе районĕнчи Небуг ялĕнчен. Хырăмне тата сулахай енчи хулпуççине амантнă хыççăн тыткăна лекнĕ. Ăна нимĕçсем çывăхран пăшала персе кăкăрне суранлатнă тата пырне каснă, ун хыççăн вара аллине тула тухмалли вырăна пăрахнă.

2. Мусаит Шимурзаев—сержант, кĕçĕн командир. Çапăçура аманнипе пуçне уйăх куçне чикнĕ сурансем персе вĕлернĕ.

3. Федор Николаевич Синькевич—1924 çулта çуралнăскер, Киев облаçĕнчи Тараш хулинчен. Хăйĕн çапăçури суранĕсĕр пуçне ăна çамкинчен çывăхранах персе витерех шăтарнă.

4. Николай Иванович Ерофеев—кĕçĕн лейтенат. Çĕçĕпе 14 тĕлте суранланă.

5. Николай Иванович Матвеев—гварди лейтенанчĕ. Питĕнчен çапнă йĕрсем пур, сулахай куçне персе шăтарнă, сылтăм аяккине хĕçпăшалпа персе суранлатнă вырăнсем пур, урисене тăлапа çыхса лартнă.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене асаплантарнă тĕлте виселица пур. Виселица айĕнче выртакан 10 çын çумĕнче нимĕнле документсем те тупайман, вĕсене пичĕсенчен çапнă, ÿчĕсем çинче кăвакарнă вырăнсем пур.

Акт çине çаксем алă пуснă: гварди капитанĕ В. М. Шумихин, санинструктор И. Н. Фокеева, çар фельдшерĕ И. М. Матвеев, санитар И. Ф. Филиппов, рота командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Стахурилов.

Йĕлтĕрлĕ кросс пирки пулнă радиоперекличка

Февралĕн 19-мĕшĕнче профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕ пирки республикăра радиоперекличка пулса иртрĕ. Радиопереличкăра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Рябов юлташ, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕсем Л. Михайловпа Петрухин юлташсем, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташ, Облвоенкомат политотделĕн начальникĕ Тютиков юлташ тата ытти те пулчĕç.

Радиопереличкăна ертсе пыраканĕ Рябов юлташ ВКП(б) Куславкка райкомĕн çарĕç отделĕн заведующине Лукоянов юлташа сăмах парать. Куславкка районĕ профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне çителĕксĕр хатĕрленнипе кĕтсе илнĕ. Кросăн малтанхи 5 кунĕ хушшинче унта ăмăртусене 1.753 çын çеç хутшăннă. 20 сехетлĕ программăпа йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлес ĕçе район сÿрĕккĕн туса ирттернĕ. Унта мĕнпурĕ те 137 йĕлтĕрçĕ-боец тата йĕлтĕр спорчĕн обществăллă инструкторне икĕ çынна çеç хатĕрленĕ. Кроса колхоз çамрăкĕсем пачах тенĕ пекех хутшăнмаççĕ.

ВЛКСМ Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ Кириллов юлташ кроса районра 3.400 çын хутшăнни çинчен пĕлтерет. Вĕсенчен 2.042 çын ГТО значокĕн нормисене, 1.120 çын БГТО значокĕн нормисене панă. Мартăн 1-мĕшчен район кроса татах 3.000 çын ытла явăçтарма шутлать.

ВКП(б) Йĕпреç райкомĕн секретарне Захаров юлташа сăмах параççĕ. Йĕпреç районĕнче йĕлтĕрлĕ кросс питех те сÿрĕккĕн иртет, унта йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлесси те çителĕксĕр пулса пырать. Районра ку таринччен пĕтĕмпе те 302 йĕлтĕрçĕ-боец тата йĕлтĕр спорчĕн 18 инструкторне çеç хатĕрленĕ. Йĕлтĕрлĕ кроса 976 çын кăна хутшăннă.

Кун хыççăн ВКП(б) Канаш райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Петров юлташ, ВКП(б) Шăхасан райкомĕн секретарĕ Матвеев юлташ, ĕççынни депутачĕсен Ишлей район Совечĕн исполкомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт инспекторĕ Чернова юлташ хăйсен районĕсенче кросс мĕнле иртни çинчен каласа пачĕç.

Февралĕн 14-мĕшĕпе 19-мĕшĕ хушшинче республикăра профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне 55.054 çын хутшăннă. Вĕсенчен 27.038 çын ГТО значокĕн нормисене, 23.314 çын БГТО значокĕн нормисене панă. Кросс уйрăмах Хĕрлĕ Чутай районĕнче ăнăçлăн иртсе пырать. Унта 3.400 çын хутшăннă. Кроса Çĕмĕрле районĕнче — 3.125 çын, Шăхасан районĕнче —3.133 çын тата Шупашкар хулинче 4.321 çын хутшăннă. Анчах чылай районсенче йĕлтĕрлĕ кросс хăй тĕллĕн иртессе шанса пурăнаççĕ. Шăмăршă районĕнче, сăмахран, йĕлтĕрлĕ кроса 5 кун хушшинче мĕнпурĕ те 165 çын çеç хутшăннă, Улатăр районĕнче — 282 çын, Канаш хулинче — 412 çын тата Улатăр хулинче— 364 çын çеç хутшăннă. Асăннă районсемпе хуласенчи руководительсем йĕлтĕрлĕ кроса тивĕçлипе ертсе пымаççĕ.

Радиоперекличка вĕçленес умĕн ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Рябов юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл кроса предприятисенчи тата колхозсенчи çамрăксем сахал хутшăннине палăртрĕ. Малтанхи пилĕккунлăхри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе, кроса ĕççыннисен анлă массисене явăçтарма мерăсем йышăнма хушрĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти историне вĕренме пăрахнă

ЙЕПРЕÇ. Отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн районри парторганизацин составĕ чылай улшăнчĕ. Çакă вăл коммунистсем хушшинчи партиллĕ пропаганда ĕçне вăрçă условийĕсене май йĕркелесе яма хушрĕ. Çавна шута илсе, парти организацийĕсем марксизм-ленинизм теорийĕпе парти историне вĕренессине организациленипе пĕрлех, Сталин юлташăн доклачĕсемпе приказĕсене, çавăн пекех совет халăхĕ Германи фашизмне хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă çинчен вĕренессине те организацилерĕç.

Марксизм-ленинизм теорине, отечественнăй вăрçăпа граждăн вăрçин историйĕсене тата Сталин юлташ вăрçă вăхăтĕнче тунă докладсене вĕренекенсене пулăшас шутпа ВКП(б) райкомĕ райцентрта тата пуçламĕш парторганизацисенче часчасах лекцисемпе докладсем ирттерет. ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ тĕрлĕ темăсемпе нагляднăй пособисем парса тата выставкăсем организацилесе тăрать.

1942 çулта ВКП(б) райкомĕ парти историне вĕренекенсене пулăшас шутпа райцентрта тата Буинск поселокĕнче 32 лекци ирттернĕ, вĕсенче 1.948 çын пулнă. 32 лекцирен 25-шне отечественнăй аслă вăрçă çинчен ирттернĕ. ССР Союзĕнчи халăхсен историйĕпе граждăн вăрçи историйĕ çинчен 5 лекци ирттернĕ.

Райцентрта, районри промышленность предприятийĕсенче тата ялсенче политикăллă пĕлĕве ÿстерекенсене пулăшма 152 доклад тунă, вĕсене 9.128 çын итленĕ. Докладсене çак темăсемпе тунă: «Отечественнăй аслă вăрçă тата социализмлă пурлăха сыхласси», «Тăван çĕршыва хÿтĕлесси—ССР Союзĕнчи кашни граждданинăн таса тивĕçĕ», «Сталин юлташ отечественнăй аслă вăрçă çинчен», «Хĕрлĕ Çар пирĕнтен мĕн кĕтет»? т. ыт. те.

Анчах партиллĕ пропаганда ĕçĕ çителĕклĕ пулса пырать теме çук-ха. Уйрăмах марксизм-ленинизм теорийĕпе парти историне вĕренесси çителĕксĕр пулса пырать. Коммунистсенчен чылайĕшĕ вăрçă пуçлансан парти историне вĕренме пăрахнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Комсомол йышĕ ÿссех пырать

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Çак кунсенче машинно-тракторнăй станцинчи трактористсен курсĕнче вĕренекен 12 çамрăк комсомол ретне кĕчĕç. Çавнашкалах комсомолăн «Восход» колхозри пуçламĕш организацине те 6 çын хутшăнчĕ.

Вĕренÿ отличникĕсем комсомол ретне кĕреççĕ. Январь уйăхĕн юлашки кунĕсенче Çĕнĕ Кипеçри вăтам шкулта 8 вĕренекен, Хирти Явăшри туллимар вăтам шкулта 12 вĕренекен, Аслă Çĕрпÿелĕнчи вăтам шкулта 7 вĕренекен, Комсомольскинчи вăтам шкулта 13 вĕренекен комсомола кĕчĕç.

В. Андреев.

* * *

КАЛИНИНО, февралĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолăн Юнтапари «Алмаз» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Томашева юлташ) колхоз çамрăкĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлет. Вĕсене политика тĕлĕшĕнчен ÿсме пулăшать. Çавна май колхозри 6 çамрăк стахановец çак кунсенче ВЛКСМ ретне кĕчĕç. Вĕсен шутĕнче—Р. Платонов, А. Архипов, И. Сергеев юлташсем.

Б. Шорников.

Хĕрлĕ Çар кунне 1-мĕш квартал планне тултарнипе кĕтсе илеççĕ

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Шăхасанти «Сталь» промартелĕн коллективĕ 1943 çулхи производство планне 200 процентран кая мар пурнăçлама обязательство илчĕ. Артель коллективĕ çак обязательствăна куллен хĕрÿллĕн ĕçлесе пурнăçа кĕртсе пырать. Январь уйăхĕнчи плана артель 197 процент тултарчĕ. Çĕвĕ çĕлекен цехри работницăсем Варвара Филиппова, Александра Данилова, Мария Николаева, Вера Григорьева тата Татьяна Григорьева юлташсем хăйсен сменăри ĕç нормине тăтăшах 250 — 275-шер процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем талăкра тумалли ĕç графикне пурнăçа кĕртмесĕр ĕçрен каймаççĕ.

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ войскăсене панă приказ артельре производствăллă çĕнĕ çĕкленÿ пуçарчĕ. Рабочисемпе работницăсем, Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, тата лайăхрах, тата тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле 1-мĕш квартал планне пурнăçлама конкретнăй обязательствăсем илчĕç. Çĕвĕ çĕлекен цехри М. Яковлева, А. Андреев тата М. Иванов юлташсен бригадисем, январь уйăхĕнчи ĕç планне 200—215 процент таран тултарнăскерсем, халĕ февраль уйăхĕнче икниçĕ хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ. М. Яковлева бригади уйăхри ĕç планне çур уйăх хушшинче 104 процент тултарчĕ. А. Андреев, М. Иванов юлташсен бригадисем те февраль уйăхĕнчи ĕç планне çур уйăх хушшинче пурнăçланă. Пĕтĕмĕшпе илсен, артель производство планне февраль уйăхĕнчи заданине февралĕн 13-мĕшĕнчех 113 процент тултарчĕ. Совет халăхĕн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ 25 çул тултарнă куна «Сталь» промартелĕ 1-мĕш квартал планне срокчен пурнăçланипе паллă тăвать.

В. Веселов.
(Хамăр корр.).

Планран ирттерсе продукци кăлараççĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Инвалидсен «Красный воин» артель коллективĕ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна февраль уйăхĕнчи ĕç планне тултарнипе паллă тăвать. Январь уйăхĕнчи ĕç планне 137,4 процент тултарнă хыççăн, артель коллективĕ февраль планне ирттерсе тултарассишĕн кĕрешме обязательство илнĕччĕ. Халĕ уйрăм цехсем хăйсен обязательствине чыслăн пурнăçларĕç. Пир-авăр цехĕ февраль уйăхĕнчи ĕç планне февралĕн 12-мĕшĕнчех ирттерсе пурнăçланă. Халĕ вĕсем планран ирттерсе продукци кăлараççĕ.

Çуракине вăйлăн хатĕрленеççĕ

ШАМАРША. Хĕрлĕ Çар вăрçă хирĕсенче пысăк çĕнтерÿсем туса пынипе хавхаланса, «Красная звезда» колхоз членĕсем çуракине вăйлăн хатĕрленеççĕ. Боецсемпе командирсен геройла ĕçĕсем çине вĕсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илнипе ответлесшĕн. Çуракине хатĕрленсе, колхоз уя 2.700 тонна тислĕк кăларчĕ, 50 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 25 центнер кĕл пухса хатĕрлерĕ. 31 плуг, 53 сÿре, 4 сеялка çураки ĕçне пуçăнма хатĕр лараççĕ.

П. Кузьмин.

Паттăррăн çапăç, эпир отлично вĕренĕпĕр

Нумаях пулмасть Шăхасанти вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем хăйсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă орденоносец Лев Михайлович Михайловран çыру илнĕ. Шкулти учительсемпе вĕренекенсем уп патне ответлă çыру ячĕç.

«Хисеплĕ Лев Михайлович!

Шăхасанти вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем сана, Тăван çĕршыва паттăррăн хÿтĕлекене, пĕтĕм чĕререн хĕрÿллĕ салам яраççĕ. Эсĕ Правительство наградине илме тивĕçлĕ пулнишĕн эпир те тем пекех савăнатпăр. Санăн кĕрешÿри паттăрлăх пире лайăхрах вĕренме, фронта пулăшас ĕçе вăйлатма хавхалантарать.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, эпир фронта пулăшас тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлетпĕр. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тунă çĕре пĕр эрне хушшинче 7.500 тенкĕ укçа пухса патăмăр, самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума паянхи кун тĕлне 3.200 тенкĕ пухрăмăр. Укçа-тенкĕ пухасси малалла пырать. Кунсăр пуçне оборона фондне 8.381 тенкĕ укçа, 6.150 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене хывтăмăр. Çавăн пекех Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕр кĕрĕк пиншак, 4 мăшăр çăматă, 11 çĕлĕк, носкисемпе чăлхасем 18 мăшăр, 20 мăшăр тăла, 18 алшăлли, 30 енчĕк, сăмса тутрисем 160 тата ытти япаласем те пухса патăмăр. Халĕ, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа, фронта 4 посылка ятăмăр.

Çу вăхăтĕнче эпир 11 килограмм шиповник, 14 килограмм эрĕм ути, 17 килограмм пилеш тата ытти те пухса патăмăр. 23 тонна тимĕр-тăмăр пухрăмăр.

Эпир — пионерсемпе вĕренекенсем — çарпа физкультура ĕçне те аван вĕренетпĕр. Çак кунсенче 93 вĕренекен ГСО значокĕн нормине, 31 вĕренекен ПВХО значокĕн нормине, 24 ача ЮВС значокĕн нормине пачĕç. Йĕлтĕрпе çÿреме лайăхрах вĕренес тесе, хамăрах 101 мăшăр йĕлтĕр туса хатĕрлерĕмĕр.

Çавăнпа пĕрлех шкулти отличниксен йышĕ те ÿссех пырать.

Шкулта вĕреннисĕр пуçне эпир çывăхри колхозсене пулăшса тăратпăр. Иртнĕ çулта пирĕн вĕренекенсем колхозра ĕçлесе пурĕ 13.000 ĕçкунĕ турĕç. В. Горинов, Ю. Нимаков вĕренекенсем колхозра 202—300-шер ĕçкунĕ тунă. Халь эпир колхозсене çуракине хатĕрленме активлăн пулăшатпăр.

Хисеплĕ Лев Михайлович! Кĕрешÿре татах та çирĕп пул! Фашистла оккупантсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыр! Эпир фронта пулăшас тĕлĕшпе татах та вăйлăнрах ĕçлĕпĕр.

Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

Вĕренекенсемпе учительсен пухăвĕ хушнипе:

Шкул директорĕ **В. Нимаков**, Профком председателĕ **А. Соловьева**, учком председателĕ **А. Матвеев**, ВЛКСМ организацин секретарĕ **Борушко**, пионерсен дружинин начальникĕ **Л. Нимакова**, старши вожатăй **Шерман**, отличниксем: **Т. Жилина, М. Слесарев, Бызалова.**

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 18-мĕшĕнче, кăнтăрла, Англи авиацийĕ Францине Бельгире чугунçулсене тапăннă. Москито бомбардировщикĕсем Турти чугунçул узелне вĕçсе пырса тапăннă. Чугунçул мастерскойĕнче тата депора бомбăсем çурăлнине паллă тунă.

Февралĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Вильгельмсгафен хулине çав тери вăйлăн атакăланă.

Англи истребителĕсем Францине Бельгири чугунçул обьекчĕсене, баржăсемпе карапсене пенĕ. Çыранти оборона авиацийĕ Голланди çыранĕ патĕнче тăракан карапсене тапăннă.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, тĕнĕл держависен войскисен малта пыракан отрячĕсем Тунисăн кăнтăр пайĕнче Обейтлы тата Фериаиы ятлă пунктсене илнисĕр пуçне тата Касерги ятлă пункта йышăнса илнĕ. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсем асăннă пунктсене йышăннă хыççăн союзниксен оборона линийĕ каялла, Фериана, Касерин тата Орейтлы пункчĕсене пĕрлештерекен çул хыçĕнчи тусем патнелле чакнă.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕМ ИМОТСКИ ХУЛИНЕ ОККУПАНТСЕН АЛЛИНЧЕН ТЫТСА ИЛНĔ

ЖЕНЕВА, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килекен хыпарсем тăрăх, партизансен пĕрлешнĕ отрячĕсен ушкăнĕ тăхăр сехет хушши çапăçнă хыççăн Имотски хулине йышăнса илнĕ. Оккупантсем хулана вăйлăн çирĕплетнĕ пулнă, ăна пысăк гарнизон хÿтĕленĕ. Çапăçу хирĕнче салтаксемпе офицерсен виллисем нумай выртса юлнă. Пысăк трофейăсем тытса илнĕ.

КИТАЙРИ ФРОНТСЕНЧЕ ĔÇ МĔНЛЕ ПЫРАТЬ

Китай командованийĕн представителĕ калани

ЧУНЦИН, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Китай командованийĕн представителĕ пресс-конференцире çапла каланă: Юньнань провинцийĕн кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи пайĕнче японецсен ĕçĕ ăнман хыççăн, унта вĕсем пысăк çухатусем тÿснĕ хыççăн, вĕсем халĕ ĕнтĕ Центральнăй тата Вăтам Китайра операцисем пуçласа янă. Февралĕн 11-мĕшĕнче, сăмахран, японецсем Гуандунра тăватă колоннăпа наступлени пуçарса янă—Кантонран çурçĕр-хĕвеланăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле, Синхойран тата Самшуйран. Çапăçусем Бэйцзян шывĕ тăрăх тата Синзянран кăнтăралларахра пыраççĕ. Юлашки пĕлтерÿсем тăрăх, Кантонран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре японецсен наступленине чарса лартнă.

Февралĕн 15-мĕшĕнче японецсем пĕр вăхăтрах сакăр колоннăпа наступлени пуçласа янă—Чжецзян провинцийĕнчен, Иочжоу, Цзянгоу т. ыт. районсенчен пуçласа янă. Пĕр колонни Янцзы шывĕн кăнтăр енне каçса темиçе пункт тытса илнĕ. Хăшпĕр районсенче японецсене сирсе янă.

Китай командованийĕн представителĕ çапла пĕлтернĕ: Иочжоу районĕнче Япони войскисене пухса хатĕрлени палăрать, çавăнтан японецсем Чанша çине тăваттăмĕш наступлени тума хатĕрленеççĕ пулмалла.

ГИТЛЕРЛА ПУÇЛĂХСЕМ ШИКЛЕНЕÇÇĔ

Геббельс Берлинра тухса калани

ЖЕНЕВА, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Берлинра «хĕвелтухăç фронтĕнчи кризиспа тотальнăй вăрçă» çинчен Геббельс сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: хальхи вăхăтра Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Германи çарĕ кризис тÿссе ирттерет, çав кризис хальчи çивĕч тапхăра çитрĕ. Вăл кризис «Сталинград патĕнче нимĕçсене пĕтермеллех çапнă хыççăн пуçланса кайнă». «Хĕвелтухăçĕнче,—тенĕ вăл, —эпир вăрçă тĕлĕшпе йывăр ларутăрăва кĕрсе ÿкрĕмĕр. Ку хĕлте тăшман этем шухăшласа пĕлме пултарайман пек, историре нихăçан пулман пек хытă хĕсрĕ», тенĕ. Германи тÿснĕ пораженисем пысăк пулнине палăртса, Геббельс каллех «пĕтĕм Европа умĕнче большевикла хăрушлăх» тăнипе хăратма хăтланнă.

Гитлерла пуçлăхсем «Совет Союзĕн вăрçă хăватне çителĕклĕ хак памарĕç» тесе йышăнса, вăл «Халĕ ĕнтĕ фактсем çине тÿррĕмĕнех пăхма тивет, вĕсем тем тĕрлĕ йывăр тата хаяр пулсан та», тенĕ.

Геббельс, пĕтĕм вăрçă тăршшĕпех Совет Союзне çăмăллăн тата хăвăрт çĕнтересси çинчен сÿпĕлтетсе нимĕçсене улталаса пынăскер, Германи çарĕ тÿсекен хальхи поражени сăлтавĕсем çинчен каласшăн пулман: «Халĕ,—тенĕ вăл,—çакă епле пулма пултарчĕ тесе ыйтма вăхăт мар. Çак ответа каярахха хăвармалла пулать. Вăл ответ вара пире килсе тивнĕ инкек тарăн пулнине тата вăл пирĕнтен килменнине кăтартса парĕ».

«Тотальнăй», урăхла каласан, пĕтĕмĕшлĕ мобилизаци тума пĕтĕм вăя пухма чĕнни Геббельс сăмахĕнче пысăк вырăн йышăннă. Нимĕçсем, тенĕ Геббельс, тахçанах ĕнтĕ пысăк йывăрлăхсем тÿсеççĕ, анчах хальхи положени «халăхăн пурнăçне малашне татах хĕсме ыйтать». «Никам та,—тенĕ вăл,—тăшман Германи чиккинчен аякра-ха, тесе, хальхи йывăр тапхăра çăмăллатса кăтартмалла мар». Геббельс çапла каланă: Германин кăна мар, «Германи аллинче тăракан Европăн чылай пысăк пайĕн» вăрçас хăвачĕпе те тĕппипех усă курмалла пулать, тенĕ.

Çав вăхăтрах Геббельс Германи хăйĕн «союзникĕсене» шанма пултарайманнине кăшт палăртса хăварнă: «Çак вăрçăра Германи поражени тÿсес пулсан, пирĕн туссене пÿрнесемпех шутласа тухма пулать», тенĕ вăл.

РУМЫНСЕН ХАÇАЧĔ РУМЫНИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇЛĔ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ САРĂЛНИ ÇИНЧЕН

СТАМБУЛ, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестра тухса тăракан «Порунка времей» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германи армийĕсем поражени тÿсни çинчен калакан хыпарсем халăх хушшинче сарăлаççĕ. Нимĕçсен ĕçĕсем ăнăçман пирки «нумай румынсем савăнса йăл кулса илеççĕ», тет хаçат.

«Донау цейтенг» хаçатăн Бухарестри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: халăх хушшинче тĕрлĕ «сиенлĕ шухăш-кăмăлсемпе хыпарсем» сарăлассине чарас тĕлĕшпе Румыни правительстви тивĕçлĕ мерăсем йышăнать». Бухарест хулинче юлашки кунсенче каллех тата 100 çынна арестленĕ, вĕсене «çав çынсен ĕçĕсем çĕршывăн йĕркелĕхне тата лăпкăлăхне сиенлеççĕ» тесе айăплаççĕ. Пĕтĕм Румынипе январьте темиçе пин çынна арестленĕ.

ФИНЛЯНДИРЕ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИВĔЧЛЕНСЕ КАЙНĂ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндире политикăллă лару-тăру йывăрланса пынине пĕрмаях массăллă облавăсем туни те кăтартать. Финсен «Соумен сосиалидемократта» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, пĕр Хельсинки хулинче çеç 1942 çулта полици кафесемпе ресторансенче 20.107 хут, урамсенче—13.494 хут, вокзалсенче—198 хут облава туса ирттернĕ. Çав облавăсем вăхăтĕнче темиçе пин çынна арестленĕ, вĕсем хушшинче çартан тарса килнĕ е çарта урăх преступлени тунă 6.097 салтак, ĕç повинноçĕнчен пăрăнса юлнă 2.000 çынна яхăн пур, законсăр хĕçпăшал тыткаланăшăн, сывлăшран пырса тапăнассинчен сыхланас правилăсене юриех пăснăшăн арестленисем пур.

Пĕлтерÿ

Февралĕн 21-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 16 сехетре, Мускавра Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа çамрăксен митингĕ пулать.

Митинга радиопа параççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 080 Типографи № 1. Управленин полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.